ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ СТУДЕНТСЕН ОТРЯЧӖСЕН ЕҪ-ХӖЛНЕ ПАТШАЛĂХ ПУЛĂШАССИ ҪИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья. **Çак Саккун йĕркелекен ыйтусем**

Çак Саккун Чăваш Республикинче студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшăвĕ парас право никĕсне, Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсен студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшас енĕпе пурнăçламалли полномочийĕсене тата çавнашкал пулăшăвăн майĕсене палăртать.

2 статья. **Студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшăвĕ парас сферăри хутшăнусене право енчен йĕркелесси**

Студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшăвĕ парас сферăри хутшăнусене право енчен йĕркелес ĕç Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ çинче никĕсленет, ăна Федерацин "Раççей Федерацийĕнчи вĕренӳ çинчен" 2012 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 273-ФЗ №-лĕ саккунĕпе, Федерацин "Раççей Федерацийĕнчи çамрăксен политики çинчен" 2020 çулхи раштав уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 489-ФЗ №-лĕ саккунĕпе, Раççей Федерацийĕн ытти нормативлă право акчĕсемпе килĕшӳллĕн туса пыраççĕ тата вăл çак Саккунран, Чăваш Республикин ытти саккунĕсенчен тата Чăваш Республикин ытти нормативлă право акчĕсенчен тăрать.

3 статья. **Çак Саккунра усă куракан тĕп ăнлавсем тата терминсем**

Çак Саккун тĕллевĕсем валли çак тĕп ăнлавсемпе тата терминсемпе усă кураççĕ:

студентсен отрячĕ – пĕтĕмĕшле вăтам, вăтам професси пĕлĕвĕ тата аслă пĕлӳ памалли тĕп вĕренӳ программисене алла илекен вĕренекенсен (малалла – вĕренекенсем) обществăлла пĕрлешĕвĕ, унăн ĕçĕ-хĕлĕн тĕллевĕ вĕренӳрен пушă вăхăтра экономикăн тĕрлĕ отраслĕнче ĕçлеме кăмăл тăвакан вĕренекенсене вăхăтлăха ĕçпе тивĕçтересси;

студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшасси – Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне пулăшса тăрас тата хавхалантарас, вĕренекенсене социаллă практикăна, çав шутра ĕçлев тата экономика ĕç-хĕлне ăнăçлă явăçтарма условисем туса парас, вĕренекенсен професси хăнăхăвĕпе ăсталăхне йĕркелес, вĕренекенсен потенциалне аталантарас тата ăна малалла пурнăçа кĕртсе пырас тĕллевсемпе тăвакан информаци, йĕркелӳ, финанс тата ытти мерăсен пĕрлĕхĕ.

4 статья. **Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшас енĕпе пурнăçламалли полномочийĕсем**

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшас енĕпе пурнăçламалли полномочийĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

1) студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшас енĕпе Чăваш Республикин саккунĕсене йышăнасси, вĕсене пăхăннине тата мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесси;

2) Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн ытти полномочисене пурнăçласси.

5 статья. **Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшас енĕпе пурнăçламалли полномочийĕсем**

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшас енĕпе пурнăçламалли полномочийĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

1) студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшас енĕпе Чăваш Республикин нормативлă право акчĕсене йышăнасси;

2) студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшас енĕпе патшалăх политикине пурнăçлассине йĕркелесси;

3) студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшас енĕпе мероприятисем палăртакан Чăваш Республикин патшалăх программисене çирĕплетесси тата вĕсене пурнăçа кĕртес ĕçе йĕркелесси;

4) студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшас енĕпе Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органне (малалла çавăн пекех – полномочиллĕ орган) палăртасси;

5) Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен ĕç-хĕлне йĕркелесе тăрас ĕçе пурнăçласси тата вĕсем федерацин ĕç тăвакан влаçĕн территори органĕсемпе çыхăнса ĕçлессине йĕркелесси;

6) Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн ытти полномочисене пурнăçласси.

6 статья. **Полномочиллĕ органăн студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшас енĕпе пурнăçламалли полномочийĕсем**

Полномочиллĕ органăн студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшас енĕпе пурнăçламалли полномочийĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

1) Чăваш Республикин территорийĕнче йĕркеленĕ студентсен отрячĕсен реестрне полномочиллĕ орган çирĕплетнĕ йĕркепе тытса пырасси;

2) Чăваш Республикин территорийĕнче студентсен отрячĕсен членĕсем валли ĕç вырăнĕсем туса паракан организацисен реестрне полномочиллĕ орган çирĕплетнĕ йĕркепе тытса пырасси;

3) студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх енчен пулăшмалли мерăсене çак Саккунпа пăхса хăварнă майсемпе тивĕçтересси;

4) студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне пропагандăлас тата халăх хушшинче сарас енĕпе мерăсем йышăнасси;

5) студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне çамрăксене явăçтарма условисем туса парасси;

6) студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне пулăшу парас тĕллевпе студентсен отрячĕсемпе аслă пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсем, професси пĕлĕвĕ паракан вĕренӳ организацийĕсем тата ĕç паракансем çыхăнса ĕçлессине йĕркелесси;

7) студентсен отрячĕсем Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе, обществăлла пĕрлешӳсемпе тата студентсен отрячĕсен

ĕç-хĕлне пулăшас енĕпе ĕçлекен ытти организацисемпе çыхăнса ĕçлессине йĕркелесси;

8) Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн ытти полномочисене пурнăçласси.

7 статья. **Студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшу памалли майсем**

Студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх енчен çак майсемпе пулăшу параççĕ:

1) информаци пулăшăвĕ парасси;

2) йĕркелӳ пулăшăвĕ парасси;

3) финанс пулăшăвĕ парасси;

4) Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх енчен ытти майсемпе пулăшасси.

8 статья. **Студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне информаци пулăшăвĕ парасси**

Студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне информаци пулăшăвĕ парас енĕпе çак ĕçсене туса ирттереççĕ:

1) студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне çутатма массăллă информаци хатĕрĕсемпе çыхăнса ĕçлеме пулăшасси;

2) полномочиллĕ орган "Интернет" информаципе телекоммуникаци сетĕнчи официаллă сайта Чăваш Республикин территорийĕнче йĕркеленĕ студентсен отрячĕсен реестрне, Чăваш Республикин территорийĕнче студентсен отрячĕсен членĕсем валли ĕç вырăнĕсем туса паракан организацисен реестрне тата студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх енчен пулăшу парассипе çыхăннă информацие вырнаçтарасси;

3) студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлĕ çинчен калакан информацие "Интернет" информаципе телекоммуникаци сетьне вырнаçтарасси;

4) конкурссем, конференцисем, семинарсем, "çавра сĕтелсем", студентсен отрячĕсен презентацийĕсене тата ытти мероприятисене йĕркелес ĕçе хутшăнни урлă студентсен отрячĕсен çитĕнĕвĕсене аталантарма пулăшса пырасси;

5) студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшас енĕпе ирттерекен мероприятисем çинчен студентсен отрячĕсене пĕлтерсе тăрасси;

6) Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн ытти информаци мероприятийĕсене ирттересси.

9 статья. **Студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне йĕркелӳ пулăшăвĕ парасси**

Студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне йĕркелӳ пулăшăвĕ парас енĕпе çак ĕçсене туса ирттереççĕ:

1) вĕренекенсене студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне явăçтармалли мероприятисем йĕркелеме пулăшасси;

2) студентсен отрячĕсен членĕсем валли ĕç вырăнĕсем хатĕрлеме пулăшасси;

3) ĕç паракансене студентсен отрячĕсене ĕçсем тăвас е пулăшу ĕçĕсем парас ĕçе явăçтарма условисем туса пама хавхалантарасси;

4) студентсен отрячĕсене хăйсен ĕç-хĕлне пуçарса яма пулăшасси;

5) Чăваш Республикин территорийĕнче студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлĕпе çыхăннă мероприятисене йĕркелес тата ирттерес енĕпе пулăшасси;

6) студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне йĕркелес енĕпе конкурс мероприятийĕсене ирттересси;

7) студентсен отрячĕсене вĕсен ĕç-хĕлĕн тĕрлĕ ыйтăвĕсемпе консультацисем тата методика пулăшăвĕ парасси;

8) Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн ытти йĕркелӳ мероприятийĕсене ирттересси.

10 статья. **Студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне финанс пулăшăвĕ парасси**

Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсен студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшас ĕçре Чăваш Республикин студентсен отрячĕсен ĕç-хĕлне патшалăх пулăшас енĕпе патшалăх программисене пурнăçланипе çыхăннă тăкакĕсене Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем валли уйăракан укçа-тенкĕ шучĕпе тата шайĕнче укçа-тенкĕпе тивĕçтереççĕ.

Социаллă тĕллевлĕ коммерциллĕ мар организацисем шутланакан студентсен отрячĕсене Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче социаллă тĕллевлĕ коммерцисĕр организацисене пулăшу парасси çинчен" 2011 çулхи авăн уйăхĕн 15-мĕшĕнчи 61 №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн патшалăх енчен пулăшу пама пултараççĕ.

11 статья. **Çак Саккун вăя кĕресси**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 19-мĕшĕ
45 №